## УМ СĂМАХ

Тест – тĕплĕ пĕлӳ пухма хистекен, пĕлĕве тĕрĕслемелли илĕртӳллĕ те кăткăс мелсенчен пĕри. Вĕрекенсен пĕлĕвне тест мелĕпе тĕпчени – вĕренекенсене кĕнекери хайлавсене тимлĕрех вулама хистет. Мĕншĕн тесен, шкулта ĕçленĕ май, час-часх çакна асăрхама пулать. Нумай чухне ачасем хайлавсене çиелтен çеç вулаççĕ. Ĕç ăçта, хăçан, кампа пулса иртнине пĕлмессе те пултараççĕ.Тест ирттерни хайлава тимлĕрех вулама вĕрентет. Çавăн пекех кĕске вăхăтрах класри пур ачан пĕлĕвне те тĕрĕслеме май парать тата вĕренекенсем хăйсен ĕçĕн паллине тӳрех пĕлеççĕ. Вĕренекен  хăш вырăнта такăннине тата мĕнле йăнăш тунине ăнлантарса пама пулать. Тестсене уйрăм произведени е пĕр – пĕр писатель пултарулăхне вĕреннĕ хыççăнхи тĕрĕслев тата ытти йышши тĕрĕслев валли те йĕркелеме пулать.

Хуравсене хакламалли виçесем. Ĕçĕн 95-100% пурнăçланă пулсан „5”-пе хакламалла, 81-94% пулсан – „4”-па, 50-80% пулсан – „3”-пе, 50% сахалрах пулсан – „2„-пе.

## Ева Лисина пурнăçĕпе пултарулăхĕн паллăрах енĕсем, „Мускав кушакĕсене чапа кăлартăм” хайлавĕн сăнарлăхпа илем тĕнчи

1. **„Мускав кушакĕсене чапа кăлартăм”калав авторĕ**.

А. К.Иванов / *Ă. Е.Лисина* / Б. Ю.Скворцов

**2.Калаври кушак ячĕ.**

*А. Аттус* /Ă. Măр – мăр /Б. Аспус

**3.Кушака çӳлти хутран çӳреме кам вĕрентет?**

А. Григорий Прокопыч/*Ă. Прокопий Степаныч*/Б. Кришша

**4. Мускава Пăркка мучи тепĕр хут хăçан каять?**

А. Çур çултан/Ă. Пĕр çултан/Б. Çулталăк çурăран

**5.Мускава миçе хурпа кăвакал тушки илсе килет вата мучи?**

*А. 2/* Ă. 4/ Б. 6

**6. Мускава çитсен ывăлĕ патне мучи мĕнпе каять?**

А. Автобуспа/ Ă. Троллейбуспа/ *Б. Таксипе*

**7. Аттуса мĕнле çĕр-шыва цирка илсе каяççĕ?**

А. Америкăна/*Ă. Японине*/Б. Африкăна

**8.”Вылять, çав вăхăтрах ăс пухать – чисти пĕчĕк ача пек.”**

**Панă предложенире чĕлхен мĕнле илемлĕх мелĕ пытаннă?**

*А. Танлаштару/* Ă. Тупмалли юмах. / Б. Антоним

**9. „Сире мĕнле чĕнеççĕ? Нивушлĕ эсир пĕтĕм Мускав сума сăвакан Пăркка мучи пулатăр? „Çак сăмахсен авторĕ кам?**

А Кришша ывăлĕ/Ă. Прокопий Степанчă/*Б. Илья Андрейччă*

**10. „Чĕре шалтах çурăлса кайрĕ” фразеологизм пĕлтерĕшĕ.**

А. Савăннине пĕлтерет/ Ă. Хуйхăрнине пĕлтерет/ *Б. Хăранине пĕлтерет.*

## Юрий Скворцов „Ама çури анне”

**1.Хайлаври тĕп сăнар мĕн ятлă?**

А. Илюш**/** *Ă. Митя***/** Б. Кулине аппа

**2. Ама çури амăшне арçын ача мĕн тесе чĕнет?**

*А. Нисса Никифировна/* Ă. Марфа Никифировна / Б. Акулина Никифировна

**3. Апат - çимĕçне ама çури амăшĕ ĕçта пытарса усрать?**

А. Тумбочкăра/ *Ă. Буфетлă сĕтелре*/ Б. Шкафра

**4. Ашшĕ ывăлĕ выçă пурăннине мĕншĕн пĕлмест?**

А. Яланах ĕçленипе/*Ă. Командировкăра пулнипе*/ Б. Ачин пурнăçĕ çинчен пĕлменнипе

**5. Митя миçемĕш класра вĕренет**?

А. 6/ Ă. 4/ *Б. 5*

**6. Шкултан килсен арçын ачана ама çури амăшĕ мĕн ĕçлеттерет?**

А. Тислĕк хыртарать/ *Ă. Кĕпе çутарать*/ Б. Пача çумлаттарать

**7. Пĕррехинче шкулти вечер хыççăн Митя ăçта каять?**

А. Акулин аппа патне/ *Ă. Илюш юлташĕ патне*/ Б. Килне

**8. Кулине аппана Митя кампа танлаштарса пăхрĕ?**

А. Ашшĕпе/ *Ă. Ама çури амăшĕпе*/ Б. Аккулин аппапа

**9. „...ик алла пĕр ĕç." çак ваттисен сăмахне кам калать?**

*А. Илюш амăшĕ/* Ă. Аккулин аппа/ Б. Ниса Никифировна

**10. Хайлав тĕп шухăшне хăш предложени уçса парать?**

А. Илюшсен пӳрчĕ ăшă./ Ă. Çырмари вакра Митя кĕпе – йĕм чӳхет./ *Б. Мĕн тери телейлĕ вĕсем, тăван аннеллĕ Илюшсем.*

## Тиххăн Петĕркки „Çутталла"

**1.Çутталла"хайлав жанрĕ.**

А. Юмах/ Ă. Калав/ *Б. Инсценировка*

**2. Ивансем килĕнче миçен пурăнаççĕ?**

А. 5/ *Ă. 6*/ Б. 7

**3. Григорий Пахомов Иваншăн кам пулать?**

А. Тăван мар ашшĕ/ *Ă. Тăван мар аслашшĕ*/ Б. Кӳршĕри мучи

**4. Пахомовсен çемйи хирте мĕн ĕçлет?**

*А. Тырă вырать/* Ă. Тырă акать/ Б. Çĕр сухалать

**5. Хайлавра чăвашсен мĕнле йăли çинчен аса илнĕ?**

*А. Чӳклеме/* Ă. Мăн кун/ Б. Çимĕк

**6. „Ват çын пуçĕ - шултăра ала , нимĕн те тытса тăраймасть." Çак сăмахсене хайлавра кам калать?**

А. Наçтаç/ *Ă. Алтати*/ Б. Униç

**7. Хайлавра çак сăмахсене кам тата кама калать? „"Пысăк çын пулатăн. Ачам, инçе утатăн эсĕ".**

*А. Чикан майри Ивана калать/* Ă. Чикан майри Матви Йванне калать/ Б. Пăркка Наçтаçа калать

**8.” Виçĕ утăм ярса пуссанах ӳкекен çын пĕчĕк ту çине те хăпараймасть.” Çак предложени мĕн пулать-ши?**

А. Каларăш/ *Ă. Ваттисен сăмахĕ*/ Б. Тупмалли юмах

**9. Ваттисен сăмахне малалла вĕçле.Чăваш йăли -**

А. Мухтанчăк/ Ă. Ĕçченлĕх/ *Б. Сăпайлăх*

**10. Мĕнле çĕнĕ хыпар кĕтет –ши Пахомовсен кил – йышне?**

А. Пахомова глава пулма чĕнеççĕ/ *Ă. Ивана Пăрăнтăк шкулне вĕренме чĕнеççĕ*/ Б. Алтатти чирлесе ӳкет

## Хветĕр Уяр „Эсир Куçука курман-и?”

**1.”Эсир Куçука курман-и!” калав авторĕ**

*А. Х.Уяр/* Ă. П.Ялкир/ Б. Т. Петĕркки

**2.Куçук кам патĕнче пурăнать?**

*А. Йăван мучи патĕнче*/Ă. Чĕкеç кума патĕнче/Б. Кавĕрле мучи патĕнче.

**3.Куçуксем килте миçен пурăнаççĕ?**

А. 2/*Ă. 3*/Б. 1

**4.Мĕн ятлă çырмара сиплĕ шыв тупаççĕ?**

А. Хăмăрçыр/*Ă. Хĕрлĕçыр*/Б. Симĕсçыр

**5. Çырмана шыв шырама кайсан кам çырантан ӳкме тытăнать?**

А.Ваçça/*Ă. Коля*/Б. Палля

**6.Отряд вожатыйне мĕнле чĕнеççĕ?**

А. Александр Николаевич/*Ă. Александр Петрович*/Б. Петр Александрович

**7.Çăл патне Куçук мĕнпе анать?**

*А.Вĕренпе/*Ă. Чикмекпе/Б. Сиксе

**8.Куçука мĕн парнелеççĕ?**

А.Кĕнеке/Ă.Грамота/*Б.Значок*

**9. Хăш сăмах çаврăнăшне калавран илнĕ?**

*А. Чавса тăршшĕ тыттарать/*Ă. Хуп турттарать/Б. Йĕп чиксен те куç курмасть

**10. „Ĕнсе хыçне çарăк аксан шăтмалла" куçăмлă предложени мĕне ăнлантарать?**

А.ăслă пулнине/ Ă.вăйлă пулнине/ *Б. Таса мар çӳренине*

## Иван Егоров пурнăçĕпе пултарулăхĕ, „Ывăл" хайлавăн сăнарлăхпа илем тĕнчи.

**1. И.Егоровăн шăллĕ мĕн ятлă?**

А. Саша / *Ă. Мишша* / Б. Алеша

**2. Улатимĕр мĕн кĕтĕвĕ кĕтет?**

А. Ĕне / Ă. Пăру / *Б. сурăх*

**3. Амăшĕ ăна мĕн çиме парса ярать?**

А. Хăяр / *Ă. Помидор* / Б. какай

**4. Улатимĕр мĕн çухатать?**

А. Шапкине / *Ă. Пиçиххине* / Б. пушăтне

**5. Ачасене кĕтӳре мĕнле выльăх итлемен?**

А. Сурăх / Ă . така / *Б. качака*

**6. Çумăр çинче йĕпенес мар тесе ачасем мĕн тунă?**

*А. Хӳшĕ* / Ă. шăтăка кĕрсе выртнă / Б. йывăç айне пытаннă

**7. Улатимĕр килнĕ çĕре амăшĕ мĕн пĕçерсе хунă?**

А. Пăтă / *Б. Яшка* / В. чей

**8. Ашшĕ мĕнле журнал вулама ларнă?**

А. "Ялав" / *Б. "Тăван Атăл"* / В. "Сунтал"

**9. Улатимĕр мĕнле кĕнеке вулать?**

А. "Вăрçă ачисем" / Ă. "Салтак ачисем" / *Б . "Партизан Мурат"*

**10. Автор мĕнле ваттисен сăмахĕсене усă курать?**

А. Çиччĕ виç те пĕрре кас. / Ă. Ир тăракан çерçи тулă тупнă. / *Б. Тăвар мар, ирĕлсе каяс çук.*

**11. Кам вăл чĕлхесĕр январ?**

*А. Сурăх* / Ă. Ĕне / Б. така

**12.Мĕн вăл вăрман сăмси?**

А. Вăрман вĕçĕ / Ă. Вăрман варри / Б. Вăрман пуçламăшĕ

**13.Халтан кайнă тенине мĕнле ăнланмалла?**

А. Ывăннă / Ă.савăннă / Б.кӳреннĕ

**14.Туйăм çупăрлать тенине мĕнле ăнмалла?**

А.

## Лидрия Сарине „Цирк курма кайни"

**1.  Калаври тĕп сăнар мĕн ятлă?**

А.Сашук/Ă. Шурик/*Б.Володя*

**2  Володя тĕлĕкĕнче мĕн курнă?**

А.  Слон/*Ă.  Упа*/Б.  Арăслан

**3.Куккăшĕ хăнаран кучченеç мĕн парса янă?**

А.   Кукăль/Ă.   Куймак/*Б.   Хуплу*

**4.Ашшĕпе амăшĕ Володьăна мĕн тесе улталанă?**

А.   Ĕне шырама янă/*Ă.   Пăру шырама янă*/Б.    Сурăх хăвалама янă

**5.Арçын ача куççульне мĕнпе шăлчĕ?**

А.    Ал шăллипе/Ă.   Пит шăллипе/*Б.   Саппун аркипе*

**6.Ăçта кайса ларчĕ Володья?**

А. Улма йывăççи айне/*Ă. Чие йывăççи айне*/Б.  Хурлăхан йывăççи айне

**7.   Асламăшĕ ашшĕпе амăшне мĕншĕн вăрçнă?**

*А.  Улталанăшăн/*Ă.  Эрех ĕçнĕшĕн/Б.  Хăнана кайнăшăн

**8.Пукан çинче мĕн выртать?**

А.  Çĕлĕк/*Ă.   Карттус*/Б.    Алса

**9. Цирк ялĕ миçе çухрăмра вырнаçнă?**

А.   10./Ă.   5./*Б.   15.*

**10. Калаври лаша мĕн ятлă?**

А.   Çумăр/*Ă.   Çиçĕм*/Б.   Çăлтăр

**11.Куккăшĕпе инкĕшĕ мĕнле ĕçкĕ ĕçнĕ?**

*А.   Кĕмĕл туй/*Ă.  Çуралнă кун/Б.   Акатуй

**12. Володьăна кучченеç мĕн тата кам парса янă?**

А.   Инкĕшĕ, карттус/*Ă.   Куккăшĕ, кĕпе*/Б.   Асламăшĕ, мăйăр

**13. Кучченеçе арçын ача ăçта усранă?**

А.  Шифонерьта/Ă. Шкапра/*Б.  Арчара*

## Валерий Туркай „Айăп”

**1.Калаври ĕç хăçан пулса иртет?**

*А. Çуллахи çумăр хыççăн/* Ă. Хĕллехи тăман хыççăн/ Б. Кĕркунне

**2.Якку тетепе Миккуç тете мĕн кĕтĕвĕ кĕтеççĕ?**

*А. Ĕне/* Ă. Сурăх/ Б. Лаша

**3.Ĕнесем шыв ĕçнĕ вăхăтра кĕтӳ ачи мĕн тунă?**

А. Хĕвел çаврăнăнăш çинĕ/ *Ă. Мăйăр татнă*/ Б. Шыва кĕнĕ

**4.Вĕсем пĕр ирхине мĕн кураççĕ?**

А. Кашкăр/ *Ă. Пăши* / Б. Тилĕ

**5. Мĕн ятлă шыв урлă ишсе каçнă чĕр чун?**

А. Атăл/ Ă. Çавал/ *Б. Кĕтне*

**6.Кĕтӳçсем курнă чĕр чун ăçта пырса кĕрет?**

*А. Яла/* Ă. Хулана/ Б. Кӳлĕ хĕррине

**7. Ял халăхĕ мĕн ĕçлет?**

А. Утă çулать/ *Ă. Пӳрт купалать*/ Б. Пахча акать

**8. Пăшисем миçен пулнă?**

А. 1/ *Ă. 3*/ Б. 2

**9.Мĕншĕн пăши вилет?**

*А. Çынсем чунсăр пулнăран/*Ă. Чирлесе/ Б. Кирлĕ мар апат çинипе

**10. Пăши ӳтне ăçта хураççĕ**

*А. Çунтарса яраççĕ/* Ă. Çĕр чавса пытараççĕ/ Б. Йытăсем çисе яраççĕ

## Борис Чиндыков „Аçу”

**1. ”Аçу” хайлаври ĕçсене çыравçă ăçтан илсе çырса парать?**

А.  Хаҫат –журналтан вуласа пĕлнĕ/ *Ӑ.  Хăйĕн пурнăҫĕнчен илнĕ*/ Б.Телевизорпа курнă

**2.  Толик аҫу валли мĕнле укҫапа эрех илет**?

А.  Пенси укҫипе/ *Ӑ.  Касушăн панă укҫапа*/ Б.  Урамран тупнă укҫапа

**3. Роза аку пĕчĕк ачана эрех парса тĕрĕс тăвать-и?**

А.  Тĕрĕс / *Ӑ.  Тĕрĕс мар*/ Б.  Пĕлместĕп

**4. Толик эрех илнĕ хыҫҫăн килне ăҫтан каять?**

А.  Урампа/ Ӑ.  Ҫырмапа/ *Б.  Анкарти хыҫĕпе*

**5.Толик хырăмĕ выҫă пулнăран мĕн ҫиет?**

А.  Пан улми/ Ӑ.  Кишĕр/ *Б.  Симĕс помидор*

**6. Толик ашшĕне ĕҫме мĕн парать?**

А.  Турăх/ Ӑ.  Чей/ *Б.  Уйран*

**7. Арҫын ачан „пĕчĕк юлташĕ" мĕн ятлă?**

А. Бобик/ *Ӑ.  Жучка*/ Б. Моська

**8.  Толиксен ĕни мĕн ятлă?**

*А.  Красуль/* Ӑ.  Маруҫ/ Б.  Хураҫка

**9.  „Аҫу урăлсан кивҫенне илме хам пыратăп.  Пĕччен мар ял совет секретарĕпе". Ҫак сăмахсене кам калать?**

А.  Галя аку/ *Ӑ.  Наҫтук аку.*/ Б.  Роза аку

**10.  „Кăмака ҫинче кăна ҫутă вылять." Мĕн ҫути –ши вăл?**

А.  Уйăх ҫути/ Ӑ.  Ҫăлтăр ĕути/ *Б.  Ĕмĕт ҫути*

## Н. Мартынов „Юнлă ҫырла"

**1."Юнлă ҫырла" хайлав авторĕ.**

А.  Ю.Скворцов/ Ӑ.  В.Степанов.  / *Б.  Н.Мартынов*

**2.Хайлаври тĕп сăнар ячĕ.**

А.  Кирилл Петрович/ *Ӑ.  Петр Кириллович*/ Б.  Петр Петрович

**3.Тĕп сăнар миçе çулта?**

*А. Çитмĕле çывхарать/* Ă. Утмăла çывхарать/ Б. Алла çывхарать

**4.Калаври ĕç çулталăкăн хăш вăхăтĕнче пулса иртет?**

А. Хĕлле/ *Ă. Çулла*/ Б. Кĕркунне

**5.Петр Кирилловичăн вăрçăри юлташĕ мĕн ятлă?**

А. Мĕтри/ Ă. Çерккей/ *Б. Йăван*

**6. Тĕп сăнарăн юлташĕ Чăваш Республикин хăш тăрăхĕнчен?**

А. Атăл тăрăхĕнчен/ *Ă. Кĕтне тăрăхĕнчен*/ Б. Çавал тăрăхĕнчен

**7. Петр Кирилловичăн тусĕ мĕншĕн мина çинче сирпĕнет?**

А. Канма выртсан/ Ă. Уçăлса çӳренĕ чухне/ *Б. Уçланкăна çырла çиме кĕрсен*

**8. „Ара, курмастăн-и, асăрхаттарни пур: минăсем те лартнă унта." Калавра çак сăмахсене кам калать?**

А. Автор/ *Ă. Петр Кириллович*/ Б. Йăван

**9. Çич ют сăмах çаврăнăшĕн синонимне тупăр**.

*А. Тăшман/* Ă. Тус –юлташ/ Б. Тăван

**10. Калавра мĕн çырли юна аса илтерет?**

*А. Хурăн çырли/* Ă. Хăмла çырли/ Б. Çĕр çырли

## Сергей Павлов „Ача вăййи мар"

**1. Панă хайлавсенчен хăшне Сергей Павлов çырнă?**

А.Пахчари çĕмĕрт/ *Ă. Ача вăййи мар*/ Б. Юнлă çырла

**2. Çимун Кавĕрлине ăçта илсе каяççĕ?**

*А. Вăрçа/* Ă. Хăнана/ Б. Салтака

**3. Хайлаври тĕп сăнар ячĕ**

А. Кириле/ *Ă. Кируш*/ Б. Маруç

**4. Арçын ачан амăшĕ кам пулса ĕçлет?**

*А. Почтальонкă/* Ă. Дояркă/ Б. Колхозник

**5. Ануш аппана ĕçре кам пулăшса пырать?**

А. Кинĕ/ *Ă. Ывăлĕ*/ Б. Хĕрĕ

**6.Мĕншĕн Кирушран ачасем пăрăнса çÿреме тытăнаççĕ?**

А. Çырăвĕсене пăтраштарса валеçнĕшĕн/ *Б. Çыру валеçнĕ чухне пĕлмесĕр ташлаттарнăшăн*

**7. Салтак ачине çĕр улми кăларма камсем пулăшаççĕ?**

А. Петюкпа Хветюк/ Ă. Ял халăхĕ/ *Б. Наталипе юлташĕсем*

**8. Тырă тиенĕ лавсем çинче чи малта кам ларса пырать?**

А. Петюк/ Ă. Хветюк/ *Б. Кируш*

**9. „Ырă чунлă-çке вăл, эпир шанмасăр пурăнатпăр..”Çак сăмахсене камсем калаççĕ?**

А. Наталипе тантăшĕсем/ *Ă. Петюкпа Хветюк*/ Б. Кирушпа Петюк

**10. „Кируш ватăсемпе те калаçма вĕренсе çитрĕ, именме пăрахрĕ”.Хуравра хăш сăмахсен синоимĕсенене çырнă?**

А. Çамрăксемпе/ *Ă. Пуплеме*/ Б. *Вăтанма*

## М.Трубина „Шĕшкĕ”

**1.”Шĕшкĕ” жанрĕпе мĕн вăл?**

*А. Юмах/* Ă. Калав/ Б. Сăвă

**2. Шĕшкĕ тĕмине ачасем çулталăкăн хăш вăхăтĕнче хуçса пĕтернĕ?**

А. Çуркунне/ Ă. Хĕле/ *Б. Кĕркунне*

**3.Шĕшкĕпе юнашар мĕнле йывăç ÿснĕ?**

*А. Ăвăс/* Ă. Хурăн/ Б. Юман

**4. Хăçан йывăçсем ÿсмесĕр тĕлĕрсе лараççĕ?**

А. Кĕркунне/ Ă. Çулла / *Б. Хĕлле*

**5. „Ан хуйхăр пĕчĕк лутра шĕшкĕ. Кăçал санăн канас пулать,"- тесе кам калать.**

А. Ăвăс/ *Ă. Хĕвел*/ Б. Çил

**6. Кĕркунне шĕшкĕ тĕмĕ патне миçе ача килеççĕ?**

А. 3/ Ă. 4/ *Б. 2*

**7. Мăйăр ӳстернĕ-ши шĕшкĕ йывăççи?**

А. Ӳстернĕ/ *Ă. Ӳстермен*

**8. „Эпир ку шĕшке мăйăр татнă чух пĕтĕмпех хуçса, втса пĕтертĕмĕр." Кам сăмахĕсем-ши ?**

А. Çил/ *Ă. Ачасен*/ Б. Хĕвел

**9. „Пĕтерет мана этем."- тесе мĕнле йывăç хурланать?**

А. Ăвăс/ Ă. Юман/ *Б. Шĕшкĕ*

**10. „Çапла, çапла , лутра шĕшкĕ",- тесе мĕн калать –ши?**

А. Çил/ *Ă. Хĕвел*/ Б. Çумăр

## Любовь Мартянова „Малька"

**1.Малька камсем патĕнче пурăнать?**

*А. Герман пичче/* Ă. Мишук пичче/ Б. Кĕркури пичче

**2. Йытă çав хуçасем патĕнче миçе çул пурăннă?**

А. 6/ Ă. 7/ *Б. 8*

**3. Мĕншĕ Малька хуçасем патĕнчен тухса каять?**

А. Кӳршисе чĕннипе/ *Ă. Çĕнĕ йытă çури илсе килнипе*/ Б. Лайăх пăхманнипе

**4. Йытă хуçисен килне мĕнле хуйхă килет?**

А. Пӳрчĕ çунса каять/ *Ă. Сурăхĕсем çухалаççĕ*/ Б. Ывăлĕ чирлет

**5. Малька ăçта пурăнать?**

А.Садра/ *Ă. Вăрманта*/ Б. Хирте

**6. Сурăхсене Малька ăçта тĕл пулать?**

А. Вăрман хĕрринче/ *Ă. Çырма хĕрринче*/ Б. Вăрман варринче

**7. Йытă мĕншĕн савăнать?**

*А. Килти выльăхсемпе тĕл пулнăран/* Ă. Вăрманта пурăннăран/Б. Хĕвел хытă хĕртнĕрен

**8. Малькăна вăрманта кам тĕл пулать?**

А. Саша/ *Ă. Володя*/ Б. Герман пичче

**9. Йытă мĕншĕн хуçине каçарать?**

А. Хуçи ырă пулнипе/ *Ă. Хуçине юратнипе*/ Б. Килĕнче пурăнасси килнипе

**10. Пĕчĕк Пирата кама параççĕ?**

А. Сашăна/ *Ă. Володьăна*/ Б. Герман пиччене

## Константин Петров „Сенкер çăлтăр"

**1.Калаври тĕп сăнар мĕн ятлă?**

А.Николай/ Ă. Андрей/ *Б. Андриян*

**2. Ашшĕ ачисене ăçта илсе каять?**

А. Экскурсине/ Ă. Цирка/ *Б. Авиаци уявне*

**3. Ярмăрккăра ача мĕн курать?**

*А. Самолетсен парадне/*Ă. Пасар урамĕсене / Б. Çывăх тăванĕсене

**4. Мĕнле конкурса арçын ача хутшăнать?**

А. Михĕпе сикет/ *Ă. Юпа çине улăхать*/ Б. 60 метр чупать

**5. Арçын ачана парне мĕн параççĕ?**

А. Шăлавар/ *Ă. Чăваш кĕпи*/ Б. Карттус

**6. Шкулта вĕрентекенĕ мĕн ятлă?**

А. Мария Ивановна/ *Ă. Анна Ивановна*/ Б. Нина Ивановна

**7.Пĕрремĕш урокра мĕн вĕренеççĕ?**

А. Сас паллисем/ Ă. Кун йĕрки/ *Б. Хăйсене мĕнле тытмаллине*

**8.Иккĕмĕш мĕнле урок пулать?**

А. Математика/ Ă. Вырăс чĕлхи/ *Б. Музыка*

**9. Пĕрремĕш класра миçе ача вĕренет?**

*А. 26/* Ă. 25/ Б. 27

**10. Халăхăн чипер пурнăçне мĕн татать?**

А. Вăйлă çил- тăвăл тухать/ *Ă. Вăрçă пуçланать*/ Б. Ял çунса каять

**11. Ачасене ăçта ĕçлеме илсе каяççĕ?**

А. Окоп чавма/ Ă. Вăрман касма/ *Б. Йĕтем çине*

**12.Андрияна вĕренсе пĕтерсен ăçта ĕçлеме яраççĕ?**

А. Владивостока/ *Ă. Петрозаводска*/ Б. Кавказа

**13. Салтака службăна ăçта лекет вăл?**

А. Артиллерине/ *Ă. Авиацине*/ Б. Танкиста

**14.Андриян салтакра чухне ăçта вĕренме кĕме хатĕрленет?**

*А. Авиаци училищине/* Ă. Строительсен училищине/ Б. Суворовсен училищине

**15. Андриянăн пĕрремĕш самолече мĕн ятлă?**

А. ЯК-10/ *Ă. ЯК-11*/ Б. ЯК-12

## Николай Айзман „Хăшĕ суять?"

**1."Хăшĕ суять" пьеса авторĕ.**

*А. Н. Айзман/* Ă. Н.Тереньтев/ Б. Ç.Мишши

**2. Пьесăра пурĕ миçе сăнар?**

А. 7/ Ă. 5/ *Б. 6*

**3. Хăшĕ суять" пьесăри тăп сăнар.**

А. Пиковский/ *Ă. Славка*/ Б. Окунев

**4. Славка ашшĕ мĕн ятлă?**

*А. Павел Андреевич/* Ă. Василий Кириллович/ Б. Иван Петрович

**5. Кольцовпа Славка мĕн çиеççĕ?**

А. Яшка/ *Ă. Çăмарта ăшалани*/ Б. Пăтă

**6. Славка миçе кун шкула кайман?**

А. 4/ *Ă. 3*/ Б. 2

**7.Славкăсен йытти мĕн ятлă?**

А. Кампур/ *Ă. Пулкан*/ Б. Шарик

**8. Славка мĕншĕн мăн аккăшĕсем патĕнче пурăнасшăн мар?**

*А. Мăн аккăшĕ хĕненипе/* Ă. Сунара çӳресси килнипе/ Б. Шкулата вĕренесси килменнипе

**9. Славкăна шкула чĕнме кам килнĕ?**

А. Окунев/ *Ă. Пиковский*/ Б. Маруç

**10.Славка ӳссен кам пуласшăн?**

А. Шофер/ *Ă. Летчик*/ Б. Космонавт

## Николай Сладков калавĕсем

**1."Сивĕре" калавра мулкач кампа калаçать?**

А. Кашкăрпа/ Ă. Тилĕпе/ *Б. Кĕпшĕлпе*

**2.Мулкач мĕнрен хăрать?**

А. Тилĕрен/ *Ă. Чирлесрен*/ Б. Сивĕрен

**3. Мĕншĕн чĕр чунсем выçăпа аптĕранă?**

А. Хĕлле сивĕ пулнипе/ *Ă. Юр нумай пулнипе*/ Б. Апат шырасси килменнтпе

**4. Ăтăрсен лавкки мĕншĕн хупăннă?**

А. Тавар пĕтнипе/ *Ă. Пăр катăлса аннипе*/ Б. Юшкăн тулнипе

**5. Хĕлле мĕнле чĕр чунсем шăтăкра çывăраççĕ?**

*А. Пурăшсем/* Ă. Мулкачсем/ Б. Хир сыснисем

**6. Мĕнле чĕр чун градусник евĕрлĕ?**

А. Чĕрĕп/ *Ă. Çунатлă пакша*/ Б. Пăши

**7. Кăрлач уйăхĕнче мĕнле кайăк юрлать?**

*А. Кукăр сăмса/* Ă.Курак/ Б. Çерçи

**8.Нарăс уйăхĕнче мĕнле кайăк юрлать?**

А. Куккук/ *Ă. Пысăк кăсăя*/ Б. Тăмана

**9. Пăр айĕнче мĕнле кайăк юрлать?**

А. Шапа/ *Ă. Шыв çерçийĕ*/ Б. Ăнтăр

**10. Юр кайсанах тухакан пĕрремĕш лĕпĕш ячĕ.**

*А. Вĕлтĕрен лĕпĕшĕ./* Ă. Шурă лĕпĕш/ Б. Купăста лĕпĕшĕ.

**11. Вĕлтĕрен лĕпĕшĕ ăçта хĕл каçать?**

А. Юр айĕнче çывăрать/ *Ă. Утă капанĕ ăшне выртать*/ Б. Йывăç хуппи айне выртать

**12. Вĕлтĕрен лĕпĕшĕ хăш уйăхра вăранать?**

А. Ака/ *Ă. Пуш*/ Б. Çу

**13. Мĕнле йывăç вăррисем пăши йĕрĕ çинче шăтса тухаççĕ?**

А. Юман/ Ă. Хурăн/ *Б. Чăрăш*

**14.Вăрман кĕнекине вулас тесен мĕнлеçырулăха вулама пĕлмелле?**

А. Акăлчан çырулăхне/ *Ă. Вăрман çырулăхне*/ Б. Чăваш çырулăхне

## Елизавета Осипова „Кăмăл улшăнчĕ"

**1.Хайлаври тĕп сăнар мĕн ятлă?**

А. Элекçей мучи/ *Ă. Якур мучи*/ Б. Энтри мучи

**2. Мучи юратнă мăнукĕ мĕн ятлă?**

*А. Хветĕр/* Ă. Якур/ Б. Трахвин

**3.Мучи миçе çулта?**

А. 70/ *Ă. 75*/ Б. 80

**4. Мучи мĕнле сухаллă?**

*А. Шурă/* Ă. Хура/ Б. Сухалсăр

**5. Хулана вăл мĕнпе каять?**

А. Троллейбуспа/ *Ă. Автобуспа*/ Б. Газельпа

**6. Мучи хулана мĕн йăтса килнĕ?**

А. Çĕр улми/ *Ă. Кучченеç*/ Б. Чечек

**7.Мучи хулара мĕн сутса илет?**

*А. Пан улми/* Ă. Çăкăр/ Б. Канихвет

**8. Му чи мĕн манса хăварать?**

А. Сумкине/ *Ă. Енчĕкне*/ Б. Докумĕнчĕсене

**9. Мучи хула урамĕнче камсене тĕл пулать?**

*А. Каменщик хĕрсене/* Ă. Студентсене/ Б. Врачсене

**10.Паркра ларнă чухне мучине мĕн пулать?**

А.Савăнса кулса ларать/ Ă. Чĕрепе аптăраса ӳкет/ *Б. Аппендицитпа аптăрать*

**11.Вăл больницăра миçе кун выртать?**

*А. 7/* Ă. 10/ Б. 9

**12. Хĕветĕрĕн хĕрне мĕнле чĕнеççĕ?**

А. Галя/ *Ă. Аля*/ Б. Валя

## Л.Агаков „Кăсăя"

**1.Разведчиксен взвочĕн командирĕ Телегин мĕн ятлă?**

А.Алеша /*Ă. Мишша*/ Б. Саша

**2. Вăл мĕнле çемьере çуралса ӳснĕ?**

А. Учитель/ *Ă. Рабочи*/ Б. Колхозник

**3.Пулĕмĕтсене çунтарма Мишша миĕе çынна илет?**

А. 7/ Ă.6/ *Б. 5*

**4. Телегинăн пĕрремĕш награди мĕн ятлă?**

*А. „За отвагу”/* Ă. „Зя героизм”/ Б. „За товарищество”

**5.Çапăçура вăл мĕн амантнă?**

*А. Аллисе/* Ă. Урисе/ Б. Куçĕсе

**6.Хĕр ача Телегина мĕн пăтти çитерет?**

*А. Хура тул пăтти/* Ă. Тулă пăтти/ Б.  Манна пăтти

**7. Кăсăян чăн ячĕ мĕнле?**

А. Алена/ Ă. Светлана/ *Б. Наташа*

**8.Ĕне кĕтĕвне пăхма кама хушаççĕ?**

А. Дудкина/ Ă.Басова/ *Б.Дулькина*

**9.Дулькин вăрманта хĕрарăмпа тĕл пулса мĕн пĕлтерет?**

*А. Отряд ăçта вырнаçнине/* Ă. Отрядра миçе çын иккенне/ Б. Хĕç-пăшал ăçта вырнаçнине

**10.Наташăна мĕнле медаль параççĕ?**

А.  „За отвагу”/ *Ă. „За боевые заслуги”*/ Б.  Ленин орденĕ

## Хветĕр Уяр „Куçук”

**1.Калаври ĕç хăçан пулса иртет?**

*А.Пĕрремĕш тĕнче вăрçи /*Ă. Иккĕмĕш тĕнче вăрçи

**2.Камăн отрядне хĕрлисем Çĕпĕрелле хĕснĕ?**

*А. Колчак отрядне/* Ă. Чапаев отрядне/ Б. Нимĕçсен отрядне

**3. Ял варрини кĕпер патĕнче салтаксем мĕн кураççĕ?**

А.Мулкачсене/ *Ă. Пĕчĕк ачапа йыттине*/ Б.Пĕрене купи

**4. Салтаксем ачана мĕн çитереççĕ?**

А. Яшка/ Ă.Çĕр улми/ *Б. Вир пăтти*

**5.Куçук йытти мĕн ятлă?**

А. Бобик/ Ă. Шарик/ *Б. Хураçка*

**6.Мĕнле салтакпа çывăх тăнă Куçук?**

А.  Булат/ *Ă. Юнус*/ Б.Зуфар

**7. Мĕнле ял патĕнче салтаксем Куçука çухатнă?**

*А. Золотистое/* Ă. Медовка/ Б. Буковка

**8. Салтаксем пĕр ял умĕнче камсене кураççĕ?**

*А. Ыйткалакансене/* Ă. Цыгансене/ Б. Партизансене

**9. Куçук мĕнле вилет?**

А. Нимĕçсем персе вĕлереççĕ/ *Ă. Бомба сирпĕнет*/ Б. Путса вилет

**10. Ăçта пытараççĕ Куçука?**

А. Масар çине/ *Ă. Йывăç айне*/ Б. Пĕр ялта

## Авторĕ кам-ши?

**1. „Мускав кушакĕсене чапа кăлартăм"**

А. Трубина Мархви/  *Ă. Ева Лисина*/ Б. Константин Иванов

**2. „Ăслă ача"**

*А. Геннадий Волков/* Ă. Юрий Скворцов/  Б. Георгий Орлов

**3.  „Çутталла"**

А. Порфирий Афанасьев/  Ă. Николай Ишентей/  *Б. Тихăн Петĕркки*

**4. „ Эсир Куçука курман-и?"**

А. Петĕр Ялкир/  Ă. Мария Ухсай/  *Б. Хветĕр Уяр*

**5."Ывăл"**

*А. Иван Егоров/*  Ă. Владимир Степанов/  Б. Александр Галкин

**6. „Цирк курма кайни"**

А. Раиса Сарпи/  *Ă. Лидия Сарине*/  Б. Марина Карягина

**7."Ятсăр троллейбус"**

А. Борис Чиндыков/ Ă. Александр Алка/ *Б. Льюбов Мартьянова*

**8."Юнлă çырла"**

*А. Николай Мартынов/* Ă. Сергей Павлов/ Б. Ольга Туркай

**9. „Кăсăя”**

А. Хветĕр Уяр/ *Ă. Леонид Агаков/* Б.Николай Сладков

**10. „Сенкр çăлтăр”**

*А. Константин Петров/* Ă. Лидия Сарине/ Б. Анна Николаева

## Литература терминĕсем.

**1.Пурнăçра пулса иртнĕ пĕр-пĕр ĕçе сăнлакан, калăпăшĕ тĕлĕнчен пысăках мар литература хайлавĕ вăл –**

*А. Калав/* Ă. Пьеса/ Б.Сăвă

**2. Хайлавăн хушса çырнă вĕçĕ вăл –**

А. Пролог/ *Ă. Эпилог/* Б. Кульминаци

**3.Прозăлла е сăвăлла çырнă сцена çинче кăтартма йĕркеленĕ драма хайлавĕ вăл-**

А. Калав/ Ă. Юмах/ *Б. Инсценировка*

**4. Пысăках мар кулăшла пьеса е сценка вăл –**

А. Инсценировка/ *Ă. Интермеди/* Б. Драма

**5. Хайлаври ĕçсене мĕнлерех каламаллине ăнлантарнă вырăн вăл –**

А. Пуплев/ Ă. Калаçу/ *Б.Ремарка*

**6.Сăмахăн куçăмлă пĕлтерĕшĕ вăл –**

А. Рифма/ *Ă. Троп/* Б. Сюжет

**7. Хайлавра мĕн çинчен каласа пани вăл –**

*А.Тема/* Ă. Тĕп шухăш/ Б. Сăнлани

**8. Шухăш-туйăма палăртма йĕркеленĕ сăвă йĕркисен тытăмĕ вăл –**

А. Рифма/ *Ă. Çавра/* Б.Тема

**9. Сăвă çаври вĕçĕнче сасăсем пĕр евĕрлĕ вĕçленни вăл –**

*А. Рифма/* Ă. Çавра/Б. Ритм

**10. Тытăмĕ тĕлĕшĕнчен тăватă йĕркеллĕ çавра састаш миçе тĕрлĕ пулать?**

А. 2/ *Ă. 3*/ Б. 4

**Тупмалли**


Ум сăмах....................................................................................................... 3

Тест ыйтăвĕсем…...................................................................................... 4-19